**Музыкант**

(калав)

Эпир апат çиме ларнăччĕ çеç, телефон линине тĕрĕслеме кайнă атте каялла таврăнчĕ. Хулпуççийĕнчен пăшал çакăнса тăнине курсан эпир питĕ тĕлĕнтĕмĕр.

— Пăшал туянтăн-им? — ыйтрĕ анне.

— Кăна Вăрăм Петĕртен илсе килтĕм-ха. Кĕçĕр Кăшмăш вăрманĕн кăнтăр енне, телефон юпи патне, кайса выртатăп. Такам мурĕ кунсеренех пăралуксене тата-тата ярать. Юпа çине хăпарса хăшкăлтăм ĕнтĕ. Паян та татнă.

Каç енне эпир Кăшмăш вăрманнелле тухса утрăмăр. Вăрман кĕтессинчи телефон юпи патне çитнĕ çĕре тавралăх самаях тĕксĕмленчĕ. Часах тӳпене пин-пин çăлтăр тапса тухрĕ.

Эпир курăклăрах вырăн тупса вырнаçса лартăмăр.

— Ав çав юпа çинчен куçна илмесĕр пăх, — вĕрентрĕ мана атте.

Вăхăт самаях иртрĕ — юпа патне пыракан-тăвакан пулмарĕ. Çуллахи çĕр вăрăма пымасть: анчахрах хĕвел анăç тĕксĕмленнĕччĕ, тухăç хĕреле те пуçларĕ. Куççем хупăнма, пуç кăкăр çинелле ланк усăна-усăна анма тытăнчĕ...

Ларнă çĕртех çывăрса кайнă иккен эпĕ. Атте тăк-тăк тĕкнипе вăранса кайрăм. Тул çутăлнăччĕ ĕнтĕ.

— Пăх-ха, пăх, — терĕ атте вăрман еннелле кăтартса.

Телефон юпи патнелле пĕр упа çури мĕшĕлтетсе утса пынине курсан тин кунта мĕншĕн килнине ăнкарса илтĕм.

— Çак пĕчĕк упа та юпа çине хăпарма пултарать-ши, атте?

— Тăс-с... Шăппăнрах калаç, пĕтĕмпех курăпăр ак кĕçех.

Çав вăхăтра упа çури ним шиксĕр, ниçталла пăхмасăр юпа патне пырса тăчĕ.

— Перетĕн-и? — ыйтрăм аттерен.

Тăхта, ан шарла, курар-ха мĕн хăтланнине.

Юпа тăрне чиперех улăхса çитрĕ пĕчĕк упа, унтан меллĕнрех вырнаçса пăралуксенчен пĕрне туртса карăнтарчĕ те вĕçертсе ячĕ. Кĕрн-н! янăраса кайрĕ вăрăммăн. Упа çури хăлхине юпа çумне тытса кĕрлеме чарăниччен итлесе тăчĕ. Унтан каллех пăралуксенчен пĕрне туртса карăнтарчĕ, ăна ярсан каллех итлерĕ.

— Ха, эсрел, упа темерĕн, музыкант евĕрлех хăтланать тата! — тĕлĕнсе калаçрĕ атте. — Кун пек талантпа консерваторие каймаллине систермелле мар-ши ăна?

Атте пăшала авăрларĕ.

— Атте, ан пер! — Çав тери хĕрхентĕм эпĕ упа çурине.

— Ан хăра, эпĕ ăна лекмелле пеместĕп.

Атте çавăнтах çине-çинех хыттăн кăшкăрса пăшалпа кĕрслеттерчĕ. Ăна-кăна кĕтмен упа çури юпа çинчен йăкăр-якăр шуса анчĕ, каялла пĕрре çаврăнса пăхмасăр вăрманалла тарчĕ.

Часах эпир те киле кайрăмăр, çул тăршшĕпех кулса калаçса пытăмăр.

Çавăнтанпа пăралуксене татакан пулмарĕ.

— Утаман ачи консерваторие кайса кĕчĕ пулмалла, — тет кашнинчех атте вăрманти пĕчĕк музыканта аса илсен.

*Енĕш, В. Музыкант : калав // Енĕш, В. Чи пĕчĕк патшалăх : повеçсемпе калавсем / Виталий Енĕш. – Шупашкар, 2009. – С. 269-271.*